# Ăру йĕкелĕ

## Виççĕ сонет

В. АГЕЕВА

I

Эй, йăхсем, несĕлсем! Çут тĕнчен ĕмĕрхи асапне
Тӳснĕ майăн эсир шыраман-и хĕн-хурсăр кунсем?
Пулнă çамрăк чăваш кукленсе утакан асатте,
килĕнче хăналаннă час-час хăтасем те кумсем.
Сар хĕвелĕн шевли ӳкеймен сĕм вăрман чăтлăхне
сĕмсĕр ют куççенчен тилĕ пек пытанса пурăнан
ялсенче вăл хăварнă ĕçчен те татуллă йăхне:
çук, пулман пурпĕрех ман йăх-несĕл сас-чӳсĕр вăрман.
Тĕкĕнсен, пуç тавра вăл вылятнă сулмаклă чукмар:
ман йăх-несĕл хăвачĕ çич ютшăн вылянчăк çӳп мар!
Çил салатнă час-час хĕрхенӳсĕр пушарăн кĕлне.
Сар хĕвелĕн шевли те ӳкмен сĕм вăрман чăтлăхне
вăл пытарнă каллех хăй кил-çурчĕн таса шăплăхне:
сĕн кунсемшĕн упранă юман пек ăру йĕкелне.

II

Пулнă, теççĕ, тахçан викингсем, шумерсем:
кун пирки хĕрелсех ĕнентерĕ историк.
Пурпĕрех чăвашла ăс-халпа эпĕ тăрăп,
асанне мăнукне пилсĕр ăс ан ерсем.
Çĕр ăс-халлă тĕнче—çĕрлехи çăлтăр туйĕ,
тӳпери алтăр-çăлтăр тавра явăнсан,
хыр вăрманĕ хура тăвăлпа авăнсан,
эп хама тинĕсри кимĕç евĕр çеç туйăп.
Мĕн тăвайăп?
Лаша кĕтĕвне пăхакан
кĕтӳççен хĕрлĕ куçлă вучахĕн рубинĕ
çĕр кĕпин тӳмине асилтерĕ мана.
Çĕр ачи çеç пулам, ылтăн вăрлăх акам:
пучахсем кĕр енне пуç тайсан пинĕн-пинĕн,
сивĕ хĕлĕн карма çăварне те манам.

III

Пĕчĕк çеç йăвинче хаш! сывлать сăнчăрти кил йытти,
макăрать пек Кампур куçĕнче çут тĕнчен ăраскалсăр шăпи.
Ват йăмра хыçĕнчен ерипен куç уçать тул çути,
уçăлать калинкке. Йăпăр-йăпăр утса, ав, тухать Акăшпи.
Тĕлĕнетĕп мольбертлă Агеев кунта çуккипе:
халь кĕтеççĕ ăна хăй юратнă сăнсем те тĕссем.
Шурăмпуç тăхăнать кăн-кăвак та асамлă кĕпе,
шывланса çухалаççĕ ирхи çăлтăрсен куçĕсем.
Эй, чăваш ăрăмçи!
Халь санпа вăй илет Пултару,
Акăшпи пек кулать куçунта вăл: пулаймĕ чару!
Шухăшу та ăсу тихалла ĕрĕхсе чупнăран,
савăнатпăр эпир: сан алра тĕп чăвашăн тĕнчи,
янăравлă тĕссем кайăкла чĕвĕлтетрĕç чи-чи!
Эс ăсталăх аки умĕнче ĕшенӳллĕн тăран.